# УНĂН ЮРРИСӖР КУН ИРТМЕСТ

Хăватлă пурнăç таппи малалла пынăçем Федор Павлович Павлов ячĕ, чăн тӳпери çут çăлтăр пек, хытăран-хытăрах ялкăшма тытăнать. Унăн пултарулăхĕ чăннипех пумай енлĕ. Вăл — талантлă драматург, композитор, тăван музыка культурине пуçарса яракансенчен пĕри. Ун çинчен эпир паян чĕрĕ çын çинчен калаçнă пекех калаçатпăр. Тĕрĕс, вăл чĕрĕ, ăна эпир пĕрмаях хамăр хушăра туятпăр. Ара, тĕрĕс мар-им? Хальхи вăхăтра пирĕн Чăваш çĕршывĕнче Ф. П. Павлов музыкисĕр пĕр концерт та иртмест, унăн пьесисĕр республикăри чăваш театрĕ-

семпе драмкружоксен репертуарӗ ҫук. Тӑван искусствӑшӑн Федор Павлович пултарулӑхӗ вӑл — ӗмӗр-ӗмӗр иксӗлми чӗрӗ ҫӑлкуҫ. Астӑватӑп, тӑван юрӑ-кӗвӗн иртнӗ кунҫулне тӗпченӗ май, Ф. П. Павлов хӑйӗн пӗр статйинче ҫапла ҫырнӑччӗ: «...чӑваш музыки «ҫырмари юрӑ» анчах пулнӑ. Мӗншӗн тесен чӑваш халӑхӗ, вӑйлӑ пусмӑр айӗнче хӗн курса пурӑннипе, ирӗк вырӑнсенче, таса уйсенче, аслӑ ҫул хӗррисенче пурӑнма хӑранӑ. Ӗслетсе хӑратнӑ кайӑк пек, вӑл шӑршлӑ ҫырма-ҫатрасенче ҫеҫ тарса-пытанса пурӑннӑ. Ун чухне чӑваш чӗлхинчен мӑшкӑлланӑ, чӑваш юрринчен кулнӑ. Ҫавӑнпа чӑвашсем урӑх халӑхсем умӗнче ҫӑвара уҫса ирӗклӗн, хытӑ кӑшкӑрса юрлама вӑтаннӑ. Каҫсерен ҫеҫ чӑваш ялӗсенче уявра вылякан хӗрсен хурлӑхлӑ юррисем ҫырма тӑрӑх илтӗнкеленӗ».

Халӑхра ҫӳрекен халап-юмах та ҫавӑн ҫинчен калать. Чӑваш ҫынни хӑй юррипе ют ҫын илтесрен ӗмӗртен ӗмӗр сӗм вӑрманти вӑтӑ юман хӑвӑлӗнче пытарса усранӑ имӗш. Юрласса вӑл ӑна хурлӑхлӑ купсенче кӑна кӑлара-кӑлара юрланӑ. Савӑнӑҫлӑ купсем сахал пулнипе чӑваш юррин хаваслӑ сассите сахал илтӗннӗ.

Чӑваш юррине вӑтӑ юман хӑвӑлӗнчен, тарӑн ҫырма тӗпӗнчен ирӗклӗ уҫӑ хире тухма Аслӑ Октябрь пулӑшрӗ. Ҫӗнӗ саманара чӑвашсен ҫӗнӗ музыки мӗнпур хӑвачӗпе янрама тытӑнтӑр тесе, пирӗн Федор Павлович хӑй те нумай вӑй хурса ӗҫленӗ. Ҫӗнӗ самана — Совет самани ӑна пӗтӗм чун-чӗререн хавхалантарнӑ, унӑн талантне сарлака ҫунат сарма май панӑ. Итлесе пӑхар-ха Федор Павловичӑн «Сӗрен» юррине:

> Упи каҫман ҫырминчен
> Эпир каҫса килтӗмӗр;
> Упи тухман вӑрманчен
> Эпир тухса килтӗмӗр...

Сӗрен ӗлӗкхи чӑвашсен ҫурхи уявӗ пулнӑ. Ана ирттересси халӑхӑн авалхи йӑли-йӗркипе, кулленхи хуйхи-суйхипе ҫыхӑннӑ. Анчах композитор «Сӗрен» юрра ҫӗнӗ саманара ҫӗнӗлле илемлетет. «Упи каҫман ҫырминчен» каҫса килнӗ ҫынсем савӑнасса та ҫӗнӗлле савӑнаҫҫӗ, ҫӗнӗлле юратаҫҫӗ. Йӑлтах ҫӗнӗлле! Ан тив, «ашшӗ хаяр тееҫҫӗ», анчах ӑна лӑплантарма нимех те мар иккен, «алтӑр тӗпӗ сыв пултӑр» кӑна. Ҫапла халӑх пултарулӑхӗпе усӑ курса, композитор тӗлӗнмелле тарӑн шухӑшлӑ, ҫав вӑхӑтрах кӑшт салхуллӑ, ытарлӑ та юптаруллӑ юрӑ кӗвӗлет.

Писатель-гражданин, композитор-гражданин... Çак сăмах ун чухне «модăра» пулнипе мар, вăл Ф. П. Павловшăн чăннипех тĕрĕс пулнипе эпир ăна паян тепĕр хут çирĕплетсе калатпăр. Пирĕн чаплă драматург-композитор хăйĕн кĕске те пархатарлă ĕмĕрне халăхшăн пурăнса, халăхшăн ĕçлесе ирттернĕ.

Федор Павлович Павлов 1892 çулхи сентябрĕн 25-мĕшĕнче Çĕрпӳ районĕнчи Патăръелĕнче, вăтам хресчен килйышĕнче çуралнă. Унăн ашшĕ, ялти пек каласан — Палуш пичче, ĕçчен те пуçтаруллă çын пулнă. Ерçӳллĕ вăхăтсенче вăл час-часах кĕсле тытса ларнă, ялти юрăсене кĕслепе хăйне май илемлĕн шăрантарнă. Пĕчĕк Хĕветĕр ашшĕ калакан кĕвĕсене итлеме питĕ юратнă, килте никам та çук чухне вăл хăй те кĕсле тыткаласа пăхнă. Кĕсле хĕлĕхне пӳрнепе кăшт сĕртĕнсенех ытла та çепĕç сасă тухнинчен тĕлĕннĕ. Анчах хăçан та пулин хăй юрă кĕвĕлеме тытăнасси çинчен вăл ĕмĕтленме те пĕлмен, тĕлĕкĕнче те тĕлленмен. Чи малтан — хут вĕренмелле!..

Ялти пуçламăш шкултан вĕренсе тухнă хыççăн вăл хальхи Шупашкар районĕнчи Иккассине — икĕ класлă шкула вĕренме каять. Унтан вара, 1907 çулхи кĕркунне, Федор Павлов Чĕмпĕрелле çул тытать.

Мухтавлă И. Я. Яковлев уçнă Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ çутта тухассишĕн, пĕлӳшĕн çунакан чăваш ачисене пур енчен те хăй патнелле туртнă çав. Кунта Ф. Павлов Пушкăртран килнĕ чăваш ачипе Константин Ивановпа паллашать. Пурăна киле вĕсем чи çывăх туссем пулса тăраççĕ. Туслăх йышне вĕсенчен кăшт аслăрах Н. Шупуççынни те хутшăнать. Чăваш çамрăкĕсем ĕнтĕ халăхăн хăйĕн литературипе искусстви пулассипе ĕмĕтленеççĕ. Ĕмĕтленни кăна мар, вĕсем хăйсем поэт перине, юрă-кĕвĕ кĕслипе алла тытаççĕ. Тĕнче умне кĕçех Константин Ивановăн «Нарспи» поэми çунатланса тухать.

Пултаруллă чăваш çамрăкĕсен хăюлăхĕ те пысăк пулнă çав. 1913 çулхи февралĕн 23-мĕшĕнче авалхи Чĕмпĕр хулинче тĕлĕнмелле ĕç пулса иртет. Историлле ĕç!.. Чăваш шкулĕнче вĕренекенсемпе вĕрентекенсем хăйсен вăйĕпе çав кунхине Чĕмпĕр халăхне «Иван Сусанин» опера кăтартаççĕ. Ку спектакльте Сусанин партине Ф. П. Павлов юрлать. Дирижерĕ—С. М. Максимов, чăвашсен пулас паллă композиторĕ. Опера сценине илемлетекен художник—К. В. Иванов, генилле «Нарспи» авторĕ.

Спектакль çинчен ун чухнехи «Симбирянин» хаçат питех те мухтаса çырнă. «Удивительный слух у этих чу-

ваш!» тенӗ хаҫат, хӑй шухӑшне пӗтӗҫтерсе. («Симбирянин» хаҫат, 1913 ҫулхи февралӗн 26-мӗшӗнчи 1694-мӗш номер).

Анчах халӑхӑн литературӑпа искусствӑри чӑн-чӑн пултарулӑх ҫӑлкуҫӗ Аслӑ Октябрь хыҫҫӑн тин чӑннипех хӑватлӑн тапма тытӑнать. Ҫӗнӗ самана, ҫӗнӗ тӗнче!..

Пулас драматург-композитор ӗнтӗ ҫӗнӗ саманари гражданин ҫулӗпе ҫирӗппӗн малалла утать. Ф. П. Павлов — ялти учитель, халӑх судйи, журналист. Ҫав вӑхӑтсенче вӑл «Канаш» хаҫатпа «Шурӑмпуҫ» журнала статьясемпе фельетонсем тӑтӑшах ҫырса тӑнӑ. «Судра» комедине вӑл чи малтан ҫак асӑннӑ журналта пичетлесе кӑларнӑ.

1920 ҫулхине Шупашкара куҫса килсен, Ф. П. Павлов тин ҫеҫ чӑмӑртаннӑ Чӑваш автономийӗн культурипе искусствине ӳстерсе чечеклентерес ӗҫе пӗтӗм чун-чӗрипе парӑнать. Чӑвашсен Тӗп педагогика техникумӗнче, рабфакпа совпартшкулта ҫамрӑксене музыка ӗҫне вӗрентет. С. Максимовпа В. Воробьев композиторсемпе пӗрле Шупашкарта музыка техникумӗ уҫас тӗлӗшпе пумай тӑрӑшать, юрлама юратакан ҫамрӑксене пухса, Чӑваш хорӗ йӗркелет. Ырӑ та пархатарлӑ ӗҫ!

Тӑван халӑхӑн ҫӗнӗ культурине аталантарас ӗҫе хастаррӑн хутшӑнни Ф. П. Павловӑн пултарулӑхне пысӑк вӑй парса хавхалантарать. 1916 ҫултах ҫырма пуҫланӑ «Ялта» пьесине ҫырса пӗтерсе, вӑл ӑна 1922 ҫулта уйрӑм кӗнекен пичетлесе кӑларать. Ҫак пьеса халӑх хушшине питӗ хӑвӑрт сарӑлать, ӑна Халӑх ҫуртӗсен сценисем ҫинче, шкулсемпе вулав ҫуртӗсенче лартма тытӑнаҫҫӗ. Пьесӑри тӗп геройсем Ванюкпа Елюк куракансен чи юратнӑ геройӗсем пулса тӑраҫҫӗ, пуян Ҫтаппан вара — пуҫӗншӗн те чи усал тӑшман, чи курайман ҫын.

«Ялта» пьесӑра драматург социаллӑ пысӑк ыйтусем хускатнӑ пулсан, «Судра» комедийӗнче вӑл ытларах йӑла ыйтӑвӗсене пырса тивет. Анчах йӑла ыйтӑвӗсем кӑна-ши унта? Ҫук. Ухтеркке сӑнарӗ витӗр эпир чӑваш халӑхӗн ӗнерхи тертлӗ те асаплӑ кунҫулне, Ухтеркке ӗмӗрӗмӗр тӳссе пурӑннӑ кивӗ тӗнче мӑшкӑлне куратпӑр. Чуралӑх саманин «тимӗр тылли» нумай-нумай ҫынна лӑскаса минретнӗ.

Пӗр иккӗленмесӗрех калатпӑр: Константин Ивановӑн «Нарспи» поэмипе юнашар, Ҫеҫпӗл Мишшин ҫулӑмлӑ сӑввисемпе юнашар Федор Павловӑн «Ялта» драмипе «Судра» комедийӗ чӑннипех пирӗн чӑваш литературипе

искусствин классикăллă произведенийĕсем пулса тăчĕç.

Халь ĕнтĕ музыка пирки. Çапла, Ф. П. Павлов драматург — пирĕн классик. Апчах самантлăха та пулин кăшт ытарлăрах шухăшласа пăхăпăр: епле тухса тăнă пулĕччĕ-ши пирĕн куç умне Федор Павлович, енчен вăл «Ялта» драмăпа «Судра» комедине çырман пулсан? Чиперех, Ф. П. Павлов — пурпĕрех классик, вăл — чăваш музыкин классикĕ.

Ялти кĕслеçĕ ывăлĕ Федор Павлов мĕн пĕчĕкренех халăх юрри-кĕввине юратнă. Унăн пысăк талантне ырă сĕткен паракан иксĕлми çăлкуç — халăх пултарулăхĕ. Композитор халăх юррисене пурĕ 300 ытла çырса илнĕ. Тĕпченĕ вĕсене, суйланă. Чи лайăххисене хорпа е пĕччен юрлама йĕркелесе илемлетнĕ. Çав хушăрах хăй те нумай-нумай юрă çырнă. Паян эпир уйăрса та илеймĕпĕр— хăшĕ халăхăн, хăшĕ композиторăн? Пурте вĕсем Федор Павлович чĕри витĕр ăшăнса-шăранса тухнă. «Туй юрри», «Шупашкар туйи», «Çĕмĕрт çеçки çурăлсан», «Пирĕн урам анаталла», «Йĕс таканлă», «Чĕнтĕрлĕ кĕпер», «Олту», «Тӳттĕл»... Мĕнпурне асăнса та пĕтереймĕн. Халăх Федор Павловичăн тĕлĕнмелле хитре юррисене ахалех, эп каламасăрах, лайăх пĕлет, вĕсене урăх никам юрри-кĕввипе те пăтраштармасть. Шăнкăр-шăнкăр шыв юхнă пек шăнкăртатса юхаççĕ вĕсем, шăпчăк сасси пек шăранаççĕ.

Мана Федор Павловичăн «Вĕлле хурчĕ» ятлă юрри уйрăмах хытă тĕлĕнтерет. Музыка авторĕ сăввине те хăех çырнă. Пĕр пăхсан, ытлашши нимех те çук пек кĕввинче те, сăввинче те, анчах итленĕ май, çав юрă сан чĕрӳне пĕтĕмпех çавăрса илет. Ытарайми ачашшăн, çепĕççĕн. Чăвашсен лирикăллă юррисем хушшинче — «Вĕлле хурчĕ» чи вăйли тесен, пĕрре те йăнăш пулмасть.

Пултарулăх хăвачĕ чи çӳллĕ пусăма çĕкленнĕ тапхăрта, 1928 çулта, Ф. П. Павлов «Сăрнайпа Палнай» çырнă. Симфониллĕ фантази. Тап-таса та тăп-тăрă музыка! Сăрнайпа Палнай, пĕр-пĕринпе ăмăртса, тĕлĕнмелле хаваслă кĕвĕсем калаççĕ. Мĕншĕн савăпаççĕ-ха Сăрнайпа Палнай? Чăваш çĕршывĕнче çĕнĕ самана пуçланнишĕн, çĕнĕ тĕпче вăй илнишĕн, пĕтĕм тăван тавралăх ешерсе чечекленнишĕн.

Ф. П. Павловăн «Сăрнайпа Палнайĕ» пирĕн чăваш музыкинче пысăк калăплă произведенисем çырма май пуррине, ку тĕлĕшпе халăх музыки тĕлĕнмелле пуянни не кăтартса пачĕ.

«Сăрнайпа Палнай» кĕввинче эпир хамăрăн малтанхи симфонисемпе оперăсен сассине илтрĕмĕр.

Пирĕн мухтавлă композитор чăваш музыкин историйĕпе теорине тĕпчес тĕлĕшпе те сахал мар ĕçленĕ, нациллĕ эстетика наукин малтанхи утăмĕсене тунă. Çавна май вăл чи малтан пирĕн наци искусстви мĕнле çулпа каймаллине çирĕппĕн палăртса хунă, тăван искусствăн малашлăхне Октябрьти Аслă революци çĕнтерĕвĕпе çыхăнтарнă. Акă мĕн çырнă вăл 1919 çулта:

«Чăваш музыкине кам çуратрĕ? Революци! Унта та, кунта та спектакль, пĕр ялта — концерт, тепĕр çĕрте — музыка. Пур çĕрте те хура халăх. Ватти-вĕтти, арçын, хĕрупраç — пурте курасшăн, итлесшĕн. Çакă мĕне пĕлтерет?

Искусство халăх еннелле çаврăнать, акă мĕне пĕлтерет.

Пăхар хальхи картинăсене. Этемсен сăнĕ çирĕп, чугун пек, бронза пек. Ĕçлекен сынсен кăкăрĕсем тимĕр пек, шăнăрĕсем чĕн пек, сăнчăр пек, куçĕсем хурчăка куçĕ пек çивĕч. Пурте ĕçрен тухнă, пурте ĕçре писнĕ, пурне те пуянлăх пусса пуранна, пурне те йывăр пулнă. Халĕ вĕсем пурте пĕр шутлă, пĕр чунлă, пĕр чĕреллĕ! Вĕсен шухăшĕ — тĕнчери революци, вĕсен савăнăçĕ — тĕнчери социализм.

Музыка та çавнашкалах. Унăн сăввисем çирĕпленеççĕ. Ăша кĕрсен, вĕсем чуна хаваслантараççĕ, йăваш чĕрене вăйлантараççĕ. Хальхи музыка — çĕнĕ музыка. Вăл халăх валли пулмалла, ăна пурте тăнламалла.

Сывă пултăр çĕнĕ искусство!

Сывă пултăр революци!»

Ку вăл — художник хăйне валли, çакăнпа пĕрлех тин çеç вăй илекен наци искусстви валли çырса хунă манифест. Кунта чăваш совет поэзине пуçарса яракан çулăм чĕреллĕ Çеçпĕл Мишшин сасси илтĕнет.

Федор Павлович çырнă «Чăваш музыки», «Хитре», «Тăпачă юрри», «Чăваш кĕсли», «Çырмари юрă», «Чăваш музыкин çухалнă тĕпĕ-йĕрĕсене шыраса» ятлă статьясем — пирĕн музыка теорийĕнчи ахах пек хаклă тĕпренчĕксем. «Чуваши и их песенно-музыкальное творчество» ятлă вырăсла çырнă кĕнекере вара Ф. П. Павлов историпе теори ыйтăвĕсене самаях тарăн хускатать.

Вăл питĕ çамрăк пулнă-ха, ĕмĕчĕсем вара питĕ пысăккăн калăпланса çĕкленнĕ. 1930 çулхи кĕркунне Ф. П. Павлов Ленинградри консерваторие вĕренме кай-

нă. Асталăха малалла ÿстермелле! Анчах йывăр чир унăн çутă ĕмĕтне вăхăтсăр сÿнтернĕ, унăн канăçсăр чĕри тапма чарăннă...

Çук, чарăнман!.. Иксĕлми пултаруллă чĕре таппине эпир Ф. П. Павлов çырнă пьесăсен кашни сăмахĕнче, ун юррисен кашни потинче илтетпĕр. Эпĕ çак статьяна çырса ларнă хушăра радиопа шăпах «Тÿттĕл» юрă параççĕ. Мĕн тери чĕрĕ пурнăç, мĕн тери туйăм, çамрăк та шухă туйăм тапса тăрать çав юрăра!

Çапла, унăн юррисĕр пĕр кун та иртмест. Питĕ аван! Ĕмĕр-ĕмĕр мухтав та тав сана çавăншăн, хаклă Федор Павлович! •

*1972.*